27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 14 ЮНКУН 117(6612) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çĕнĕ вĕренÿ çулне тĕплĕн хатĕрленер

Совет шкулĕнче пĕлÿ тĕрĕслевĕсем вĕçленнĕ хыççăн та кĕрÿллĕ ĕçсем пыраççĕ. Шкул директорĕсемпе учительсем, сутĕç органĕсем тата комсомолпа профсоюз организацийĕсем кăйсен пĕтĕм вăйне 1944—45-мĕш çулхи вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçе мобилизациелеççĕ. Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленме нумай районсенчи шкулсенче тытăннă, хăшпĕр шкулсем çак ĕçе вĕçлесе çитереççĕ те ĕнтĕ.

Сĕнтĕр районĕнчи Шупуçри пуçламĕш шкулăн заведующийĕ — Чăваш АСС Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Л. Яшмолкина юлташ хăй ертсе пыракан шкула вĕренÿ çулне хатĕрленме пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пынă вăхăтрах тытăннă. Ятарласа тунă комисси июнĕн 7-мĕшĕнче шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне пур енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ тесе йышăннă. Унта шкул çуртне лайăх юсанă. Учебниксемпе пособисене хатĕрлесе çитернĕ. Шкула çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлес ĕçе колхозниксен анлă массине явăçтарнă. Çавăн пекех Октябрьски районри Асанкассинчи çичĕ çул вĕренмелли тата Шупашкар районĕнчи Апашри вăтам шкулсем те вĕренÿ çулне ăнăçлăн хатĕрленеççĕ. Вăл шкулсем вутă хатĕрлесе çитернĕ, халĕ шкул çуртĕсене юсаççĕ, вĕренÿре кирлĕ япаласене хатĕрлеççĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулне тĕплĕн хатĕрленме республикăри пур шкулсенче те кирлĕ условисемпе майсем çителĕклĕ таранах пур. Çак ĕçĕн ăнăçлăхне пĕтĕмпех сутĕç органĕсемпе шкул директорĕсем тата учительсем большевикла тимлĕхпе тăрăшни татса парать.

Мĕн тумалла-ха халĕ шкулсене вĕренÿ çулне тĕплĕн хатĕрлес тĕлĕшпе? Чи малтанах, всеобуч законне тĕплĕн пурнăçа кĕртме кирлĕ условисене хатĕрлемелле. Ялсоветсемпе шкулсенчи работниксен вĕренме çул çитнĕ ачасене пĕтĕмпех тĕрĕс шута илсе тухмалла. Шкулсем çумĕнчи интернатсене хатĕрлемелле. Шкул ачисене, уйрăмах фронтовиксен ачисене, тумтирсемпе атă-пушмаксем тупса памалла. Вĕренÿ çулĕ вăхăтĕнче шкулсенче вĕри апат организацилеме продуктсем, пахча-çимĕçсем çителĕклĕ туса хатĕрлес пулать. Çавăнпа та шкул участокĕсенче акнă пахча-çимĕçсене лайăх пăхса ÿстермелле.

Вĕренÿ сулĕн базине тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Шкул çурчĕсене пĕтĕмпех юсаса йĕркелемелле, шкула валли вутă кирлĕ таранах хатĕрлесе вăхăтра турттарса хумалла. Тетрадьсемпе учебниксем кирлĕ таранах хатĕрлемелле. Мĕнпур учебниксемпе вĕренÿ хатĕрĕсене августăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр шкулсене çитермелле тăвас пулать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ирĕк памасăрах урăх енĕпе усă куракан шкул çурчĕсене пурне те шкулсене тавăрса памалла.

Чăваш АССР Сутĕç Халăх Комиссариачĕн тата районсутĕç пайĕсен учительсен кадрĕсене çителĕклĕ таран хатĕрлес, учительсен квалификацине çĕклес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла. Учительсен квалификацине ÿстерме курссем организацилес пулать, вĕсемпе методика тĕлĕшĕнчен пулăшу пама семинарсем, канашлусем ирттермелле. Анчах та Чăваш АССР Сутĕç Халăх Комиссариачĕ ку ĕçе вăрăма хăварса пырать-ха. Учительсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе тумалли мероприятисене ку тарана çитсе те тĕплĕн палăртса хуман. Кун пек сÿрĕклĕхе халех пĕтермелле.

Август уйăхĕнче учительсен районсенчи канашлăвĕсем пулса иртеççĕ. Вăл канашлусенче çĕнĕ вĕренÿ çулĕнчи задачăсем çинчен сÿтсе яваççĕ. Сутĕç органĕсен çав канашлăва ирттерме халех тĕплĕн хатĕрленме тытăнас пулать. Вырăнсене вĕренÿ планĕсемпе программисене çитермелле, вĕренÿ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли мероприятисене палăртса хумалла. Канашлусенче совет шкулĕн мĕнпур ĕçĕсене тĕплĕн тишкерсе тухса, çитес вĕренÿ çулĕнче ăнăçлăн ĕçлеме татăклă мероприятисем палăртса хăвармалла.

Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленнĕ чухне кирек мĕнле ĕçе пурнăçа кĕртес енĕпе те сутĕç органĕсемпе шкул директорĕсене партипе совет организацийĕсем куллен пулăшса пыма тивĕçлĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăрса, палăрнă çитменлĕхсене сийĕнчех пĕтермелле тăвас пулать. Вĕсен вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçе пĕтĕм общественноçа, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсене явăçтармалла. Хуçалăх организацийĕсемпе колхозсем шкулсене шефа илессине сарса пымалла. Çакна туни общественноçа тата мĕнпур ĕççыннисене партипе правительство шкул çинчен йышăннă решенисемпе тата шкул умĕнче тăракан задачăсемпе тĕплĕн паллаштармалла. Шефсем шкулсене хуçалăх тĕлĕшĕнчен кăна мар, çамрăк ăрăва воспитани парас енĕпе те куллен пулăшчăр.

Комсомол организацийĕсен умĕнче пысăк ответлăх тăрать. Вĕсен вĕренĕве явăçтарма тивĕçлĕ ачасене мĕнле шута илнине тĕрĕслесе тăмалла, шкул директорĕсемпе учительсене шкул çурчĕсене юсама, вĕренÿ хатĕрĕсене тума пулăшмалла. Хăйсен вăйĕпе шкулсен çумĕнчи тĕрлĕ мастерскойсем организацилеме, ачасене шкул çумĕнчи участоксенче тата колхозсен уйхирĕсенче тухăçлăн ĕçлеме организацилесе пымалла. Комсомол организацийĕсем шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрлес тĕлĕшпе мĕнпур ĕçсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте хăйсен активлăхне пысăккăн кăтартма тивĕçлĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулне тĕплĕн хатĕрленни —çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче çамрăк ăрăва аслă Сталин тапхăрне тивĕçлĕ воспитани парас тĕлĕшпе татах та пысăк çитĕнÿсем тума май парать. Партипе совет, комсомол организацийĕсемпе сутĕç работникĕсем большевикла тимлĕхпе ĕçлесен, отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш вĕренÿ çулне тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илме пултаратпăр.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Оборона Государственный Комитечĕн Председательне СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович! Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсене хавасланса тата тăшмана пĕтĕмпех аркатас тесе, 3058-мĕш №-ри эвакогоспитальте ĕçлекен врачсем, медсестрасем, санитаркăсем, служащисем тата çав госпитальте сывалакан боецсем, сержантсем, офицерсем санитари самолечĕ туса укçан 10.830 тенкĕ, укçан компенсаци 17.320 тенкĕ, государство заемĕсен облигацийĕсем 47.520 тенкĕлĕх, пурĕ 75.670 тенкĕ пухрĕç. Эпир Чăваш республикинчи мĕнпур госпитальсене пире малалла пырать.

Эпир Сиртен, Сталин юлташ, пире хамăр пухнă укçапа санитари самолечĕ туса тата ăна «Красная Чувашия» тесе ят пама ыйтатпăр. Хамăр пурте аслă Чăваш çĕршывĕн ячĕпе пĕлтеретпĕр нумай çуллăх пурнăçа сунатпăр.

3058-мĕш №-эвакогоспиталь начальникĕ, медицина службин майорĕ ЖАРКОВА.
Начальникăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ — майор СЕМЕНОВ.
Парторганизаци секретарĕ КАПИЛЕВИЧ.
Местком председателĕ БОРОДЯНСКАЯ.

Чăваш АССР-ĕнчи Шупашкар хули

3058-мĕш № эвакогоспиталь начальникне медицина службин майорне ЖАРКОВАНА
Начальникăн политика енĕпе ĕçлекен заместительне СЕМЕНОВ майора
Парторганизаци секретарьне КАПИЛЕВИЧА
Местком председательне БОРОДЯНСКАЯНА

3058-мĕш №-ри эвакогоспитальте ĕçлекен врачсене, медсестрасене, санитаркăсене, служащисене тата çав госпитальте сывалакан боецсене, сержантсене, офицерсене, «Красная Чувашия» ятлă санитари самолечĕ туса укçан 10.830 тенкĕ, укçан компенсаци 17.320 тенкĕ тата государство заемĕсен облигацийĕсем 47.520 тенкĕлĕх пухнăшăн, пирĕн Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăватăп.

И. СТАЛИН.

Пĕрлешнĕ нацисен Кунĕ çинчен

Кăçал та, 1942-мĕшпе 1943-мĕш çулсенчи пекех, июнĕн 14-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешнĕ Штатсем тата пĕрлешнĕ нацисен пĕтĕм çĕршывĕсем Пĕрлешнĕ нацисен кунне палăртаççĕ. Çак кун çывăхланнă май Совет Социализмлă Республикисен Союзĕн государство ялавĕсене хăпартмалла тесе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак çĕршывсенчи мĕнпур посольствăсемпе миссисене хушнă. Пĕрлешнĕ нацисен кунне 14-мĕшĕнче — Великобританипе, Америкăри Пĕрлешнĕ Штатсем тата ыттисем çак кун çине паллă тума шутланă...

Сталин юлташ союзниксен çарĕсем Çурçĕр Францие пырса кĕни çинчен

«Правда» корреспонденчĕ — СОЮЗНИКСЕМ ÇУРÇĔР ФРАНЦИЕ ДЕСАНТ АНТАРНИ ÇИНЕ СТАЛИН ЮЛТАШ МĔНЛЕ ПĂХАТЬ тесе панă ыйту çине Сталин юлташ çапла ответленĕ:

Союзниксен ирĕке кăларакан çарĕсем Çурçĕр Францие пырса кĕрес тĕлĕшпе çичĕ кун хушши çапăçнин итогĕсене пĕтĕçтерсе, пĕр иккĕленмесĕрех çапла калама пулать: Ла-Манш урлă йышлă вăйсемпе каçни тата союзниксен десант çарĕсене Францин Çурçĕр енне массăллăн антарни пĕтĕмĕшпех ăнăçлă пулчĕ. Çакă вăл — чăннипех пирĕн союзниксен чаплă çитĕнĕвĕ пулса тăрать.

Çакна йышăнмасăр тăма çук: шухăшласа хунин анлăшĕ, масштабсен пысăккăшĕ тата ĕçе пурнăçа кĕртнин мастерлăхĕ тĕлĕшпе вăрçăсен историйĕнче кун пек предприяти урăх пулман.

Çакă паллă: «никам çĕнтерейми» текен Наполеон хăйĕн Ла-Манш урлă каçмалли тата Британи утравĕсене тытса илмелли планĕпе хăй вăхăтĕнче намăсла путланса ларнă. Ла-Манш урлă каçатăп тесе икĕ çул хушши каппайнă истерик Гитлер хăй хăратса каланине пурнăçа кĕртмешĕн хăтланса пăхма та хăяймарĕ. БританипеАмерика çарĕсем кăна Ла-Манш урлă каçмалли тата десант çарĕсене массăллăн антармалли çав тери аслă плана чыслăн пурнăçа кĕртме пултарчĕç.

Истори çак ĕçе çÿллĕ пусăмра тăракан çитĕнÿ вырăнне хурса палăртĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

Ÿкерчĕк çинче: Пирĕн земляк — уйрăм часть командирĕ майор К. Ф. Макаров. Вăл вăрçă пуçланнăранпах фронтра. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç хăюллă та паттăр çапăçнăшăн ăна виçĕ хутчен наградăланă. Чи малтан «За отвагу» медаль панă, ун хыççăн Новоржев хулине ирĕке кăларассишĕн ăнăçлă та çĕнтерÿллĕ çапăçнăшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ панă, Локня чугун çул станцине туртса илнĕшĕн 2-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденне панă.

Кузьма Фомич Макаров Октябрьски районри Шупашкар Çĕньялĕнче çуралса ÿснĕ. Хĕрлĕ Çара кайиччен вăл Осоавиахимăн Шупашкар хула совечĕн председателĕ—пулса ĕçленĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 12-мĕшĕнче Карели перешеекĕнче, ЛЕНИНГРАД хулинчен çурçĕртерехре, пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн вăрман çулĕсемпе кÿлĕсем хушшинчи инженерла чăрмавĕсене çĕмĕрсе-çĕмĕрсе, çаплах малалла тапăнса пынă. Финсен оборонин пахха узелĕсене РАЙВОЛАПА КИВЕННАПАНА туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра ТЕРМОЛОВО, ХАРТОНЕН, МУЛТАЛА, ТИРТТУЛА, ИКОЛА, ТЮРИСЕВЯ, ВАММЕЛСУ ятлă ялсем тата ТЮРИСЕВЯ, РАЙВОЛА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июнĕн 11-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 30 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Карели перешеекĕнче, Ленинградран çурçĕртерехре, пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман васкасах çĕнĕ резервсем илсе пынă, вăл, нумай вăхăтлăха туса хунă йышлă оборона сооруженийĕсемпе усă курса, хытă хирĕç тăрать. Сырма-çатраллă, вăрманлă вырăнсем, шурлăхсем тата йышлă кÿлĕсем оборонăра тăма питех те аван плацдарм пулса тăраççĕ. Совет пехотипе танкĕсем, тĕрлĕрен чăрмавсене çĕмĕрсе-çĕмĕрсе, ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ, тăшман çарĕсене аркатса, пĕтерсе пыраççĕ. Хаяр çапăçусем хыççăн паян пирĕн çарсем финсен оборонин пахха узелĕсене Райволапа Кивеннапана туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Совет артиллерисчĕсем, хăйсен туписемпе персе, пехотапа танксене пĕр чарăнмасăр пулăшса пыраççĕ. Хăй тĕллĕн çÿрекен гвардейски артиллери полкĕ кун каçиччен 34 дзот çĕмĕрнĕ, 28 тупă, 30 пулемет пĕтерсе тăкнă, белофинсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн летчиксем тăшманăн çулйĕрĕсене çĕмĕрнĕ тата пырса тăракан резервĕсене пыра-пыра çапнă.

Совет воинĕсем калама çук паттăррăн çапăçаççĕ. Гварди красноармеецĕ Дмуха юлташ тăшман траншейине чи малтан вăркăнса кĕрсе кайнă, виçĕ сынна вĕлернĕ, теприне тыткăна илнĕ. Разведчиксем —гварди красноармеецĕсем Примакпа Артемов юлташсем, гранатăсемпе персе, тăшманăн темиçе салтакне вĕлернĕ, 5 финна, вăл шутра пĕр финн офицерне, тыткăна илнĕ. Сержант Горбатнев юлташ ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ тимĕрпе бетонран тунă дота штурмласа туртса илнĕ, финсен 11 салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Новосокольники хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет пехотин пĕр роти разведка тăвас тĕлĕшпе тăшмана сасартăк атакăланă. Нимĕçсем хаяррăн çапăçнине çĕмĕрсе тăкса, пирĕн боецсем вĕсене траншейăсенчен çапса кăларнă. Гитлеровецсем, çав траншейăсене каялла туртса илме хăтланса, умлă-хыçлăн темиçе контратака тунă. Нимĕçсен пехота батальонĕ танксем пулăшнипе те пирĕн ротăна хĕсме пултарайман. Совет боецĕсем тăшманăн пур атакисене те сирсе янă, йышăннă позицисене хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ. Кун каçиччен 200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 8 пулемет, 40 автомат, 60 винтовка тата пĕр радиостанци тытса илнĕ, 10 нимĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Яссы хулинчен çурçĕртерехре тăшман подразделенийĕсем пĕр чаçăн позицийĕсене атакăланă. Совет боецĕсем нимĕçсене хăйсен окопĕсем патне пыма чарса лартнă. Тĕл персе тата штыксемпе чиксе, вĕсем нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилине çити выртса юлнă. Тепĕр участокра Романенко юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем пĕр танка персе çĕмĕрнĕ, тăшманăн виçĕ туппипе 7 пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Могилев облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ тăшманăн пĕр пысăк ялти гарнизонне тапăннă. Партизансем, çав тери хăвăрт атакăласа, нимĕçсен 134-мĕш пехотнăй дивизийĕн запасри вĕренÿ батальонне аркатса тăкнă. 200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, 25 нимĕçе тыткăна илнĕ. Белосток облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ мирлĕ халăха пусмăрласа çаратакан нимĕçсене тапăннă. Хаяр тытăçура совет патриочĕсем 60 эсэсовец-бандита пĕтерсе тăкнă, 80 пуç выльăх тата мирлĕ халăхран çаратса илнĕ 10 лав пурлăха туртса илнĕ. Çав пурлăхпа выльăх-чĕрлĕхе партизансем вырăнти халăха валеçсе панă.

* * *

Ленинград фрончĕн Карели участокĕнче пулса иртнĕ çапăçусен малтанхи вăхăтĕнче финн салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна нумай илнĕ. Финсен 10-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 1-мĕш полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ капрал Салонен çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн фронтра нумай вăхăт хушши пурнăç питĕ лăпкă тăчĕ. Нумайĕшĕ çапла шухăшлама пуçларĕç: вăрçă ăста та пулин урăх районсенче, эпир вăрçмасăрах пĕтĕ, терĕç. Анчах та сасартăк эпир каллех вăрçа унăн пĕтĕм хăрушлăхĕсемпе куртăмăр. Вырăссен артиллерийĕ чăтма çук хăватлă вут-хĕм тăкрĕ. Йĕри-тавра пĕтĕм тĕнче çаврăнса кайрĕ. Тамăк чăмахах пур пулсан, унта та эпир курса тÿснĕ пурнăçран усал пулас çук. Снарядсем пирĕн укрепленисене çĕрпе танлаштарчĕç, пирĕн ретсене сайралатса хăварчĕç. Пĕтĕм подразделенисене пуçĕпех пĕтерсе-пĕтерсе тăкрĕç. Пурте кутăн-пуçăн çаврăнса кайрĕ. Пирĕн взводри икĕ отделени алăри хĕçпăшала пăрахрĕç те ăста куç курнă çавăнта тарса сухалчĕç. Эпир блиндажрах юлтăмăр, шурă ялав çакса хутăмăр, вара вырăссем пырасса кĕтсе илтĕмĕр те вĕсене тыткăна парăнтăмăр». Çав пĕрремĕш пехотнăй полкранах тыткăна лекнĕ салтак Лэури Юленен çапла каласа кăтартнă: «Çапăçу пуçламăшĕнчех пирĕн полкăн пĕрремĕш батальонĕ питех те пысăк çухатусем тÿсрĕ, иккĕмĕш батальона пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкрĕç».

Хĕрлĕ Çар енне каçнă салтак Юхо М. çапла каласа кăтартнă: «Вырăссен артиллерийĕ темĕн чухлĕ халăх пĕтерчĕ. Блиндажсене пурне те çĕмĕрсе тăкрĕ. Çакăн хыççăн эпир хамăр ротăн командăй пунктне аран-аран çиткелерĕмĕр, вара унта офицерсен землянкине пытантăмăр. Землянкăна салтаксем пырса тулчĕç. Юссила капитан пире землянкăран тухма хушрĕ, анчах никам та вырăнтан та хускалмарĕ. Никам та пĕлсе тăнă çĕртех вилме тухасшăн пулмарĕ. Хамăр позицисене тытса тăрасси çинчен шухăшламалли те пулмарĕ. Часах вырăссем çав землянкăна гранатăсем вăркăнтарма тытăнчĕç. Пăхатăп та куратăп: ман тавра вилнĕ салтаксем чĕррĕн юлнисенчен нумай ытларах выртаççĕ. Çакна кура эпĕ алăсене çĕклесе землянкăран тухрăм та вырăссем патне чупса кайрăм».

Республика уйхирĕсенче

Горючие перекетлессишĕн кĕрешмелле

Куславкка МТС-ĕнчи трактористсемпе трактористкăсем, Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнса, çураки вăхăтĕнче çĕршер килограмм горючи перекетлерĕç. Уйрăмах ĕçре коммунист-трактористсем пахха тĕслĕх кăтартрĕç. Трактористка Афанасьева юлташ çураки вăхăтĕнче 45 гектар сухалас вырăнне 108 гектар сухаларĕ, çав вăхăтрах 150 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Башков юлташ та 55 килограмм горючи перекетлерĕ. Гаврилов тракторист, 45 гектар вырăнне 154 гектар сухаласа, 360 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

Çураки ĕçне ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн, вĕсем çĕртме тума тытăнчĕç. Мясников тракторист 100 гектар çĕртме сухи тунă та ĕнтĕ. Анчах МТС-ра çураки планне тултараймасан, çав вăхăтрах горючие ытлашшипех расходланă трактористсем те нумай-ха. Сăмахран, Желтухин юлташ ертсе пыракан бригадăра пĕр тракторист та çураки планне тултараймасан, çав вăхăтрах горючи 774 килограмм ытлашши расходланă. Трактористка Белова 45 гектар вырăнне 38 гектар çеç сухаланă, 291 килограмм горючие ытлашши расходланă. Иванов плана çуррине çеç тултарнă, горючи 140 килограмм ытлашши расходланă. Тата начартарах тĕслĕхсем те тупма пулать. Акă Ефремова трактористкăнах илер. Çураки вăхăтĕнче вăл мĕн пурĕ те 5 гектар çеç сухаланă, анчах та горючине вара 262 килограмм ытларах сунтарнă.

Пĕр МТС-рах икĕ тĕрлĕ ĕç! Мĕншĕн? Чăн малтанах плана тултарайманни тата горючи ытлашши расходлани трактористсем хăйсен ĕçне лайăх пĕлменнинчен, лайăх ĕçлекен трактористсен ĕç меслечĕсемпе паллашманнинчен нумай килет. Ĕç вăхăтĕнчех тракторсене усăсăр вырăнтан вырăна куçарса çÿрени те кунта горючине ытлашши расходласси патне илсе пынă. Пăсăлнă тракторсене уйрах юсаман, вĕсене яла, хăш чухне район центрне илсе пынă тĕслĕхсем те пулнă. Паллах, трактористсем хушшинче массăллă-ăнлантарулă ĕç те çитменлĕхсĕр пулнă.

Куславкка МТС-не ертсе пыракансем халĕ хăйсен çитменлĕхĕсене лайăх кураççĕ. Çакăн пек çитменлĕхсем çĕртме тунă çĕрте пулмалла мар.

И. ШАРКОВ.

Çĕртме тăваççĕ

Ишлей ялсоветĕнчи «Сархурнай», «Социализм» колхозсем çураки ĕçĕсене вĕçленипе пĕр вăхăтрах калчасене çумкурăксенчен тасатма, хире тислĕк тăкма, ирхи çĕртме тума тытăнчĕç. Паянхи кун пĕтĕм... сухи ... Асăннă колхозсем уя тислĕк тăкма, ирхи çĕртме тума июнĕн 10-мĕшĕнче тытăнчĕç. «Ишлей» колхозра куллен 20-шер гектар çĕртме тăваççĕ, çапла вара вĕсем кулленхи задание пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыраççĕ. «Социализм» колхоз юлашки вăхăтра уя 200 лав тислĕк кăларчĕ.

Çум çумлас, уя тислĕк тăкас тата ирхи çĕртме тăвас ĕçсем районри ытти колхозсенче те пуçланчĕç.

Г. СЕРЕБРЯКОВ.

Июнĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа).

Машинăсене упраман çĕрте

Муркаш районĕнчи Шурча ялсоветне кĕрекен «Самолет» колхозра (председателĕ К. Микушкин юлташ) ялхуçалăх машинисене хисепе хумаççĕ. Уборкăна кирлĕ пулакан машинăсем те çумăр айĕнче тутăхаççĕ, хĕвелпе хавшаççĕ. Тырă вырмалли машинăсем склад тулашĕнче лараççĕ, вĕсене юсаман тата хăçан юсама пуçласси те паллă мар.

Микушкин юлташăн машинăсене юсаттарас пирки ĕçлеме «вăхăчĕ те çук», вăл ытларах ĕçсе çÿреме юратать.

А. СМИРНОВ.

Танксемпе самолетсем тума

УЛАТĂР, июнĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрманпромхозра ĕçлекен рабочисемпе служащисем Совет Союзĕн Геройĕ А. Кочетов валли самолет илме хăйсем перекетленĕ укçисенчен 70.000 тенкĕ пухса банка хывнă. Укçа пухас ĕç малалла пырать.

А. НАУМОВ,
Леспромхоз директорĕ.

* * *

МУРКАШ, июнĕн 12-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Ферапонт Головатый пуçарăвĕ районри колхозсенче анлăн сарăлса пырать. Кашмашри «Свобода» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли боевой самолетсем тума 100.000 тенкĕ, Свердлов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 50.000 тенкĕ пама пулчĕç.

Свердлов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Тихон Налимов юлташ 20.000 тенкĕ панă. Ăна кура колхоз счетоводĕ Ксения Ковалева, колхозница, Евдокия Садовникова, колхозник Вязов 5.000-шер тенкĕ панă.

Атапай ялсоветĕнчи «Крестьянин» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем пĕр-пĕрин пе ăмăртса ĕçлеççĕ. «Крестьянин» колхоз председателĕ М. Вязов юлташ 10.000 тенкĕ, колхоз счетоводĕ И. Вязов 5.000 тенкĕ панă. Çак колхозри колхозниксем пĕтĕмпе 50.000 тенкĕ пăраççĕ.

Районри ытти колхозниксем те хăйсем перекетленĕ укçи-тенкине боевой самолетсем тунă çĕре пама васкаççĕ. Оринингри «Красное Сормово» колхозăн чаплă колхозници-орденоноска Ксения Григорьева 12.000 тенкĕ, «Пионер» колхоз председателĕ Т. Сергеев юлташ 10.000 тенкĕ пама пулнă.

Укçа пухас ĕç малалла пырать.

Т. ИВАНОВ.

* * *

КУСЛАВККА, июнĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри предприятисемпе колхозсенче Хĕрлĕ Çар валли боевой техника тума укçа-тенкĕ пухасси кунран кунах сарăлса пырать. «Кызыл куч» колхоз колхозникĕсем 30.000 тенкĕ ытла пухнă. Карач ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем пĕр самолет илмелĕх пухаççĕ. «13 год Октября» колхоз членĕ Кириллов юлташ 5.000 тенкĕ панă.

Совет Союзĕн Геройĕ И. Кабалин хăйĕн тăван ялĕнче

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июнĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Совет Союзĕн Геройĕ — Днепр шывĕ урлă каçнă чухнехи çапăçусен паттăрĕ — гварди сержанчĕ Иван Кабалин ĕнер хăйĕн тăван ялне — Александровкăна килчĕ. Кунта вăл колхозниксемпе тĕл пулса калаçрĕ, колхоз уйхирĕсемпе хуçалăхне пăхса çаврăнчĕ.

Июнĕн 12-мĕшĕнче Кабалин юлташ районри партипе совет активĕпе тĕл пулчĕ. Кунта вăл хăйĕн çапăçури ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Паян чаплă герой районри колхоз активĕпе — ялсовечĕсен, колхозсен председателĕсемпе тĕл пулса калаçрĕ. Вăл, Хĕрлĕ Çарăн аслă çĕнтерĕвĕсем çинчен каласа парса, ирсĕр тăшмана хăвăртрах çапса аркатас ĕçре тăван воинсене татах та вăйлăнрах пулăшса тăма чĕнчĕ.

АЛМА-АТА ХУЛИНЧЕ МАЛТАНХИ ТРОЛЛЕЙБУС ÇУЛĔ УÇАЛНĂ. Ÿкерчĕк çинче: Троллейбус Гоголь урамĕпе пырать.
М. ЗИЛЬБЕРМАН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикинчи вăрăнти промышленноçри, апат-çимĕç тата аш-какайпа сĕт-çу промышленноçĕсенчи, промысла кооперацие инвалидсен кооперацийĕнчи уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» 109-мĕшĕ, 110-мĕш, 111-мĕш, 112-мĕш 114-мĕш тата 115-мĕш номерсенче).

210. Пелагея Дмитриевна Смолянина — Канашри [illegible] мастерскойĕн мастерне.
211. Севира Александровна Соловьева — Первомайски районри Липовкари [illegible] артелĕн столярне.
212. Мария Наумовна Солдатченкова — Шупашкари типографи инструкторне.
213. Антонина Степановна Солодовникова — [illegible] «Кооператор» артельти [illegible].
214. Трофим Иванович Соколова — Сĕнтĕрвăрри районри [illegible] председательн заместительне.
215. Илья Романович Сорокина — Первомайски райпромкомбиначĕн [illegible].
216. Ксения Павловна Спиридонова — Çĕмĕрлери [illegible] райпромкомбиначĕн мастерне.
217. Сергей Семенович Спиридонова — Улатăри кирпĕч заводĕн директорне.
218. Андрей Степанович Степанова — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Лесоруб» артельти председательне.
219. Матвей Степанович Степанова — [illegible] председатель заместительне.
220. Параскева Николаевна Стефейкина — Первомайски районри «Коммунар» артельти работницине.
221. Иван Фролович Стрежнева — Канашри [illegible] мастерне.
222. Шарафутдин Абдулавеевич [illegible] — Чкаловски райпромкомбиначĕн плотникне.
223. Алексей Васильевич Титова — Чăвашпотребсоюзĕн главнăй бухгалтерне.
224. Мария Тихоновна Тихонова — Елчĕкри [illegible].
225. Пелагея Михайловна Тихонова — Улатăри макарон фабрикинчи работницине.
226. Иван Ильич Трифонова — Шăхасан райпромкомбиначĕн производство заведующине.
227. Николай Гаврилович Трифонова — «Парижская Коммуна» артельти работникне.
228. Клавдия Николаевна Турдакова — Улатăри макарон фабрикин [illegible].
229. Мария Семеновна Туюкова — Çĕмĕрле районĕнчи Осипенко ячĕллĕ артельти [illegible].
230. Яков Липатович Тюрина — [illegible] районĕнчи [illegible] артельти работникне.
231. Анастасия Захаровна Угарова — Мăн Шахчурари Куйбышев ячĕллĕ артельти [illegible].
232. Павел Степанович Узюкина — Первомайски районри «Коммунар» артельти кĕреçесем тăвакана.
233. Николай Михайлович Устюгова — Канашри «Красный воин» артельти атă-пушмак тăвакан цехăн заведующине.
234. Георгий Федорович Угрялкина — Вăрнари промышленность Халăх Комиссариачĕн производствăпа техника отделĕн начальникне.
235. Степан Иванович Фадеева — Йĕпреç районĕнчи «Красный строитель» артельти куршак-чÿлмек тăвакан цехри мастерне.
236. Любовь Кузьминична Федорова — Октябрьски районри «Труд» артелĕн главнăй бухгалтерне.
237. Константин Федорович Федорова — Первомайски районри «Коммунар» артельти правленийĕн председательне.
238. Тимофей Дмитриевич Федотова — Сĕнтĕрвăрри райпромкомбиначĕн цех начальникне.
239. Пелагея Степановна Фролова — Первомайски районри [illegible] заводĕн [illegible] цехри мастерне.
240. Александр Степанович Филимонова — Йĕпреç районĕнчи «Социализм» артельти катка-пичке тăвакана.
241. Степан Яковлевич Хазерова — Шупашкарти «Кооператор» артельти техникне.
242. Фаина Ароновна Ханкина — Улатăрти «Красная швея» артельти работницине.
243. Михаил Данилович Харасева — Ишлей райпромкомбиначĕн управляющине.
244. Дмитрий Тимофеевич Чебанова — Улатăр районĕнчи «8-ое марта» артельти [illegible].
245. Александра Васильевна Чернова — Канашри «Красный воин» артелĕн çĕвçине.
246. Варвара Тимофеевна Чубакова — Октябрьски районри «Труд» артельти технический контроль отделĕн начальникне.
247. Дарья Андреевна Шалыкова — Елчĕкри [illegible] заводĕн директорне.
248. Сергей Григорьевич Шадрина — [illegible].
249. Тамара Григорьевна Шестакова — Улатăр районĕнчи «Красная швея» артельти [illegible] цехри мастерне.
250. Тимофей Павлович Шишкина — Канаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан артелĕн столярне.
251. Иван Иванович Шпалака — Канаш хулинчи промкомбинатăн управляющине.
252. Александр Петрович Шолина — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Кооператор» артельти работникне.
253. Евдокия Гавриловна Шумова — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Лесоруб» артельти урапасем тăвакана.
254. Галина Федоровна Щетинина — Етĕрне районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан артельти [illegible].
255. Семен Васильевич Щипцова — Елчĕк районĕнчи [illegible].
256. Надежда Васильевна Ягнина — Улатăр хулинчи промкомбинатăн токарьне.
257. Александра Яковлевна Якимова — Октябрьски районри «Труд» артелĕн çĕвçине.
258. Матрена Яковлевна Яковлева — Шăхасан районĕнчи «Сталь» артельти [illegible].
259. Никифор Федорович Янышева — Сĕнтĕр районĕнчи «Дружба» артелĕн бухгалтерне.
260. Владимир Евдокимович Ярутова — Çĕмĕрле райпромкомбиначĕн машинистне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи майăн 30-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Çара вăрçă ĕçне лайăх пĕлекен çынсем парар

Тăван çĕршыв Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалсемпе вăрçă техники, апат-çимĕç, снаряженисем панипе пĕрлех çĕнтерÿ тума чи кирлине — вăрçă ĕçне лайăх вĕреннĕ çынсем парса тăрать. Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлемелли задачăсене всевобуч органĕсем пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Всевобучăн пирĕн республикăри пункчĕсем фронт валли сахал мар паттăр боецсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Нумай пулмасть всевобуч пункчĕсенче 6-мĕш черетре вĕренекенсен пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пулса иртрĕç. Тĕрĕслевсенче пулас воинсем çар ĕçне ăнăçлăн вĕренни курăнчĕ. Çар ĕçне вĕренессине уйрăмах Шупашкарти, Шăхасанти, Канашри, Елчĕкри, Вăрнарти пунктсенче лайăх организациленипе палăрчĕ.

Шăхасан районĕнче всевобучăн 6-мĕш черетне ирттерме малтанах тĕплĕн хатĕрленнĕ. Командирсемпе семинарсем ирттернĕ. Районри партипе совет тата комсомол организацийĕсем пулăшнипе вĕренÿ пунктне лайăх хатĕрленĕ. Унта общежити, вуламалли пÿлĕм тунă. Колхозсем пулăшнипе боецсене вĕри апат çитерессине организациленĕ. Политикăллă воспитани ĕçне те лайăх йĕркеленĕ. Докладсем, лекцисем, калаçусем тăтăшах ирттернĕ, хаçат-журналсем вуласа панă, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларнă. Çакăн пек ĕçлени занятисене ăнăçлăн ирттерме, боецсене лайăх пĕлÿ пама май пачĕ.

Пулас воинсене воспитани парас тĕлĕшпе всевобуч пункчĕсенчи политработниксем нумай вăй хураççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕнче агитаципе пропагандăн нумай енлĕ формисемпе, отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи опытпа усă кураççĕ. Шупашкарти пунктра вĕренекенсем Совет Союзĕн Геройĕпе Квитков юлташпа тата нумай фронтовиксемпе çыхăну тытаççĕ. Фронтовиксен çырăвĕсем всевобуч боецĕсене лайăхрах вĕренме, дисциплинăллăрах пулма хавхалантараççĕ.

Воспитани ĕçне лайăх йĕркелени çамрăксен активлăхне çĕклет. Всевобуч пункчĕсенче вĕреннĕ чухне нумай çамрăксем комсомол ретне кĕнĕ. Çапла, Сĕрпÿ районĕнче 182 çамрăка, Елчĕк районĕнче 184 çамрăка, Куславкка районĕнче 160 çамрăка комсомола илнĕ.

Всевобучăн 6-мĕш черетри вĕренĕвĕн тапхăрĕнче хут пĕлменнисене вĕрентес, чирлисене сыватас ĕçе организациленĕ.

Анчах та çамрăксене Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕрлес ĕçре çитменлĕхсем те пурха. Хут пĕлменнисене тата сахал пĕлекенсене вĕрентсе пĕтермен, чирлисене сыватса çитермен. Ку ĕç Шупашкар, Канаш, Йĕпреç, Шăмăршă, Комсомольски районĕсенче сÿрĕк пырать. Допризывниксем хушшинче массăллă политикăллă ĕçе пур çĕрте те тивĕçлипе организацилемен.

Хĕрлĕ Çар валли çирĕп сывлăхлă, вăрçă ĕçне лайăх пĕлекен çынсем хатĕрлесси — государствăн ответлă ĕçĕ пулса тăрать. Çавăнпа та халĕ пĕтĕм ĕçе тататкăлăнах вăйлатмалла, чирлисене сыватмалла, хут пĕлменнисене вĕрентмелле, призывниксем хушшинче спортпа санитари ĕçне саланса сарса пымалла. Кашни допризывник ГТО, ГСО тата ПВХО нормисене пама тивĕçлĕ. Допризывниксене Сталин юлташăн приказĕсене, Хĕрлĕ Çар йĕркисене вĕрентмелле, фронтовиксен опычĕпе ытларах паллаштармалла. Допризывниксен малта пыракан пайне комсомол ретне явăстармалла. Çак ĕçсене пурнăça кĕртес енĕпе военкоматсене комсомол организацийĕсен ĕçлĕ пулăшу памалла.

Г. ПЕТРУХИН.
ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Сылтăм флангра самаях пысăк çитĕнÿсем тунă. Халĕ пирĕн çарсем тăшманпа Мондебург хули тулашĕнче çапăçаççĕ. Çак хуларан кăнтăр-хĕвеланăçнерехре эпир тăшман контратакисене сирсе ятăмăр. Кунта тăшман пирĕн çарсем Шербур хули патнелле пыракан тĕп чугун çул магистралĕнчен хĕвеланăçнелле куçса пынине чарма хăтланса пăхрĕ. Америка çарĕсем Лизон хулине ирĕке кăларнă, вара унтан кăнтăралла сарлака фронтпа темиçе миля малалла куçнă. Тилли-Сюр-Селль хули çывăхĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Тăшманăн ку районра бронетанкавăй вăйсем нумай, вĕсем пире Сэлль шывĕ тăрăх малалла куçса пыма чарас тесе хаярран çапăçаççĕ...

Июнĕн 11-мĕшĕнче ирхине союзниксен авиацийĕ, çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, çĕр çинчи чаçсене çапăçма пулăшса пынă. Кăнтăрла çапăçакан йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем аэродромсене, кĕперсене, батарейăсене тата çапăçу пыракан районпа Париж хушшинчи ытти объектсене атакăланă. Çавăн пекех тата Па-де-Кале районĕнчи объектсем çине те бомбăсем пăрахнă.

Сывлăшра тăшман вăйлăн хирĕç тăман. Анчах та хăшпĕр районсенче зенитнăй тупăсем хытă персе тăнă. Вăрçă хатĕрĕсем турттарса пырас ĕç лайăх пырать»...

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Америка çарĕсем çаплах Вир шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре малалла куçса пынă. Котантен çурутравĕ çинче союзниксен карапĕсем тăшман куçса çÿрекен батарейăсене хаярран пенĕ. Мердере шывĕн шыв илнĕ улăхĕнчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем кăштах малалла куçнă. Тилли-Сюр-Селль районĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен танковăй çарĕсемпе хаярран çапăçаççĕ.

Июнĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен сывлăшри операцисем хытă чакрĕç, мĕншĕн тесен çапăçусен районĕнче пĕлĕтлĕ çанталăк пуçланса кайрĕ, çумăр çума тытăнчĕ.

Истребительсем (çав истребительсенчен хăшĕ-пĕрисем çинче ракетлă хĕçпăшал пулнă) штурмовиксемпе пĕрле нефтехранилищĕсене, чугун çулсемпе шоссе çулĕсен узелĕсене, ларса çÿремелли хатĕрсене, вăл шутран темиçе çĕр вагона, танксене тата бронемашинăсене атакăланă. Çак мĕнпур операцисенчен хăйсен базисене 24 самолет таврăнман, вăл шутра 3 йывăр бомбардировщик.

Июнĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксем Нантри, Эврти, Турти чугун çул центрĕсене тата Масси-Палезари (Парижран кăнтăртарахра) чугун çул кĕперне пырса çапнă. Вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем, çавăн пекех тата ракетăллă хĕçпăшал лартнă самолетсем турттарса çÿремелли хатĕрсене тата тăшман каççисене пыра-пыра çапнă. Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Голландири тата Францири аэродромĕсене ăнăçлăн атакăланă.

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ çарĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Паян пирĕн уйрăм плацдармсем талккăшпех пĕрлешрĕç. Çыран хĕрри тăрăхĕ 96 километр таран пирĕн алăра çирĕп тăрать, çав тăрăхра эпир Франци материкне шалалла кĕрсе пыратпăр. Пирĕн çарсем Кан хулинчен хĕвелтухăçнелле кăштах куçнă. Котантен çурутравĕ çинче çапăçакан американецсен çарĕсем çурçĕрелле тата хĕвеланăçнелле куçнă. Тилли-Сюр-Селль хулипе Кан хули хушшинче акăлчансен бронетанковăй вăйĕсем тăшманăн бронетанковăй вăйĕсемпе хаярран çапăçнă.

Çар суднисем фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче тата флангсенче хăйсен вут-хĕмĕпе типçĕр çинчи вăйсене чылай хытă пулăшса тăнă.

Июнĕн 12-мĕшĕнче пирĕн авиаци пысăк вăйĕсем тăшман аэродромĕсене тата йĕри-тавра 640 километр тăсăлса выртакан районри çулйĕрĕсене çĕмĕрмеллех пыра-пыра çапнă, çак район Сен-Назертан пуçласа Лилль хули патне çитиччен тăсăлса выртать. Июнĕн 12-мĕшĕнче ирхине кăнтăрлахи йывăр бомбардировщиксем Дрюпа Лилль хули хушшинчи районра 16 аэродрома атакăланă. Англири аэродромсенчен çавăн чухлĕ йышлă йывăр бомбардировщиксем пĕр харăс атакăна кĕни урăх нихăçан та пулман. Çавăнпа пĕрлех Сен-Назерти тата Париж районĕнчи 6 кĕпер çине бомбăсем пăрахнă. Бомбардировщиксене хÿтĕлесе пынă истребительсен пысăк вăйĕсем хăйсен базисем çине каялла таврăннă чухне тĕрлĕ чугун çул объекчĕсене атакăланă».

Çурçĕр Францири операцисем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ КАРАНТАН ХУЛИНЕ ЙЫШĂННА

ЖЕНЕВА, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер агентстви — Германи информаци бюровĕ — паян ирĕксĕрех çапла пĕлтернĕ: американецсен танковăй çарĕсем нимĕçсене Котантен çурутравĕ çинчи Карантан хулинчен хăваласа кăларнă, тенĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Карантан районĕнчи Америка çарĕсемпе пĕрле пыракан корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Карантан хули тулашĕнче Америка чаçĕсем тăшманпа штык вĕççĕн тытăçса хаярран çапăçнă.

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен радиовĕ çапла пĕлтернĕ: паян Кан хулинчен кăнтăртарахра союзниксем çĕнĕ авиадесант çарĕсем антарнă.

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Германин радиовĕ паян çапла пĕлтернĕ: «Хальхи вăхăтра союзниксем Сен-Ло таврашĕнчех вăйлăн атакăлама пуçланă».

МОНТГОМЕРИ ГЕНЕРАЛ ФРАНЦИРИ ОПЕРАЦИСЕМ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Францире çапăçакан 21-мĕш армейски ушкăнăн командующийĕ Монтгомери генерал хăйĕн çарĕсене чĕнсе калана. Вăл çапла каланă: «Тăватă кун çапăçнă хыççăн союзниксен çарĕсем Франци материкĕнче аван çирĕпленсе ларчĕç. Англи, Канада тата Америка çарĕсем пысăк çитĕнÿсем турĕç, çав çитĕнÿсене вăйлатса яма хăйсем валли лайăх позицисем туса хучĕç».

ЧЕРЧИЛЛЬ СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕН ФРАНЦИРИ ПЛАЦДАРМНЕ ПЫРСА КАЙНИ

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи премьер-министрĕ Черчилль союзниксен Францири плацдармне пырса курнă, унпа пĕрле фельдмаршал Смэтс тата импери генеральнăй штабĕн начальникĕ Алан Брук пулнă.

ЭЙЗЕНХАУЭР, КИНГ, МАРШАЛ ТАТА АРНОЛЬД СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ АННĂ РАЙОНА ПЫНА

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян генерал Эйзенхауэр, адмирал Кинг, геннрал Джордж Маршал тата генерал Генри Арнольд союзниксен çарĕсем аннă района пырса курнă.

БАЙЕ ХУЛИНЧИ ДЕМОНСТРАЦИ

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Нормандири çар корреспонденчĕсем французсен ирĕке тухнă пĕрремĕш хулинче пулнă демонстраци çинчен пĕлтереççĕ. Демонстрацире хулари халăхсăр пуçне куршĕри мĕнпур ялсенчи халăх та пулнă. Демонстраци «пире çара илĕр» тенĕ лозунгпа пулса иртнĕ. Корреспондентсем çапла калаççĕ: пирĕн пата кашни утăмрах французсем пырса çапла ыйтатчĕç: «Хăçан пире салтак тумтирĕ парĕç!» Кунти французсем пурте гитлеровецсемпе халех активлăн вăрçма тытăнасшăн çунаççĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра çапла пĕлтернĕ: июнĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем нимĕçсем оккупациленĕ территорисене тапăннă. «Москито» йышши самолетсен соединенийĕсем виççĕмĕш çĕр тăтăшах Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ АВЕЦЦАНО ХУЛИНЕ ЙЫШĂННА

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Адриатика секторĕнче союзниксен çарĕсем тăшмана Пескара шывĕн кăнтăр çыранĕнчен хĕссе кăларнă. Аппенин секторĕнче союзниксен çарĕсем малалла куçса пыраççĕ, вĕсем каялла чакакан тăшмана хăваласа çитме тăрăшаççĕ. Авеццано хулине туртса илнĕ.

Тибр шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Риети хули еннелле (Римран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре) наступлени туса пыраççĕ. Тибр шывĕнчен хĕвеланăçнерехре союзниксен малти чаçĕсем Баньореджо хули патне çитнĕ. (Орвиэторан кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) Монтефьясконри çулсен лаха узелĕ (вăл Больсена кÿллинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре) халĕ союзниксен аллинче. Союзниксен çарĕсен малти чаçĕсем Чивита-Веккиа хулинчен çурçĕртерехри Орбеделло хули патне çывхарса пыраççĕ.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, ĕнер Балканри объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Совет территоринчи базăсем çинчен вĕçсе хăпарнă йывăр бомбардировщиксем Румынири Фокшани аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех тата Констанцăри нефть склачĕсем çине, Джурджу хулинчи нефть склачĕсемпе портри сооруженисем çине (Румыни) бомбăсем пăрахас ĕçе те хутшăннă тата унсăр пуçне Смедерево хулинчи (Югослави) сортировка станцийĕпе нефть тасатакан заводсем çине бомбăсем пăрахас ĕçе те хутшăннă. Çанталăк начар тăнă пирки тактика авиацийĕ вăйлах кĕрешмен.

Иртнĕ çĕр союзниксен бомбардировщикĕсем Болгарири объектсем çине те бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян каçхине 8-мĕш армин çарĕсем нимĕçсене Римран 85 километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Авеццано хулипе унăн таврашĕсенчен хăваласа кăларнă.

Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: наступлени пуçланнăранпа нимĕçсен сахалтан та 70 пин салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Вăл шута вилнисем, аманнисем тата тыткăна лекнисем те кĕреççĕ.

ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ ФРАНЦИ ХАЛĂХНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Эйзенхауэр генерал Франци халăхне чĕнсе каланă. Çав чĕнсе каланă хута нимĕçсем оккупациленĕ районсене самолетсем çинчен пăрахнă тата ăна союзниксен çарĕсем ирĕке кăларнă районсенче сыпăçтарса тухнă. Унта çапла каланă:

«Эпир кунта вăрçă ĕçне çапăçу хирĕнче татса парас тесе килтĕмĕр, çак вăрçăра эсир темиçе çул хушши тăшмана хирĕç тăрса çапăçрăр. Европа халăхĕсем çĕнĕрен ирĕклĕх туянччăр тесе, эпир нацистсен тиранине кăкласа тăкăпăр. Мана, союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ пулса тăракан кана, вăрçă ĕçĕсене туса пыма хушнă. Эпĕ кăларакан приказсене хăвăрт пурнăçа кĕртсе пымалла. Урăх ĕç хушиччен кашнин хăйĕн хальхи ĕçĕсене туса тăмалла. Кам тăшманпа пĕрле кĕрешсе хăйĕн тăван çĕршывне сутнă — çавсене сирсе ярăпăр. Француз халăхĕн задачи — граждăнла администраци тăвасси тата манăн çарсемшĕн хăрушсăрлăх тăвасси пулса тăрать. Французсен ман пата янă çар миссийĕн членĕсем мана çак ĕçре пулăшса тăрĕç».

Чĕнсе каланинче малалла çапла калачă: «Вăрçă материалĕсене чи малтан кÿрсе тăмалла пулать, анчах та эпир сире питĕ кирлĕ пулăшу пама пĕтĕм вăйпа тăрăшăпăр. Гитлерла Германие пĕтĕмпех аркатса тăкас тата французсен историллĕ ирĕклĕхĕсене çĕнĕрен пурнăçа кĕртес ĕçре эсир мана пулăшасса эпĕ шанса тăратăп. Çапла тусассăн, эпир Германие çĕнтерĕпĕр, Франци вара хăйне пусмăрлакансенчен хăтăлĕ, француз халăхĕ кĕске вăхăтрах демократиллĕ майсемпе тата демократиллĕ условисенче хăй тăвас тенĕ тытăм йĕркине тума пултарĕ.

Тăшман питĕ хастарлăн кĕрешĕ. Вăл пирĕн çарсене малалла куçма кансĕрлемешкĕн темĕн те тăвĕ. Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç, пирĕн çарсем — вăйлă. Хамăрăн хĕвелтухăçĕнчи паттăр союзникпе — вырăссемпе пĕрле эпир тăшмана çĕнтерет тăрăх».

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Артиллери офицерĕ

Малалла пырса, пĕр яла йышăннă хыççăн, батарея командирĕ старши лейтенант Григорьев тупăсене пехота çывăхнерех вырнаçтарма приказ пачĕ.

— Тăшман контратака тума юратнине манма юрамасть пирĕн, — терĕ вăл асăрхаттарса.

Чăнах та, старши сержант Окуневпа сержант Беляков расчечĕсем позицисем йышăннă хыççăнах, тăшман контратакăна тухрĕ. Гитлеровецсем вăрмантан тухрĕç те пирĕн боецсем тĕппĕн вырнаçма ĕлкĕреймен ял патнелле çул тытрĕç. Каллех, çывăхрах, минăсемпе снарядсем çурăлма пуçларĕç. Пуç çийĕнче осколкăсемпе пульăсем шăхăраççĕ.

Офицер Григорьев, алла бинокль илсе, тăшмана çивĕччĕн сăнама тытăнчĕ. Инçетрех те мар, пĕр лапамра нимĕçсен танкĕсем курăнчĕç.

— Расчетсем — çапăçăва!.. — хушрĕ Григорьев.

Нимĕçсен пĕр танкĕ, иртсе пынă вăхăтрах тупăран тата пулеметсенчен персе, Окунев расчечĕ еннелле çавăрăнчĕ.

— По танку противника, бронебойным, огонь! — команда пачĕ Григорьев.

Фашистсен танкĕ 100 метра çывхарса çитсен, Окунев тупăран персе ячĕ. Снаряд тĕл тиврĕ: танкăн сăнчăрне татса пăрахрĕ. Анчах та çав вăхăтрах гитлеровецсен автоматчикĕсем, упаленсе пырса, огневой позици патнех çывхарма пултарчĕç.

— Гитлерла çĕленсене — вилĕм!.. — Каллех команда янăраса кайрĕ. Икĕ тупă татти-сыпписĕр персе тăма пуçларĕç.

Фрицсем сахал мар тăкăнчĕç кунта. Хăюллă, хăрама пĕлмен артиллеристсем, вут-хĕмпе çунтарчĕç вĕсене. Фашистсем темиçе хутчен те атакăларĕç, анчах та пĕр утăм та малалла каяймарĕç. Совет воинĕсем, хăйсем наступление куçса, тăшмана хĕсме тытăнчĕç.

Çамрăк командир — артиллери офицерĕ Илья Иванович Григорьев кашни çапăçурах хăйне валли çĕнĕ опыт пухать, хăйне пăхăнса тăракансене тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçма вĕрентет. Днепр шывĕн сылтăм енчи хамăр çĕре нимĕçсенчен тасатса пынă çапăçусенче Григорьевăн мастерлăхĕ чылаях ÿсрĕ. Нимĕç оккупанчĕсене тата ытларах кураймин пулчĕ вăл.

Нумаях та пулмасть, вăйлă çапăçу кĕрленĕ хирсем урлă — малалла, хĕвеланăçнелле иртсе кайрăмăр эпир. Аста пăхнă унта — фашистсен танкĕсем. Хăшĕсен гусеницисене салатса пăрахнă, хăшĕсем вут-хĕмпе çунса шăраннă. Контратакăна тухса, фашистсем пĕр батальон участокĕ çине 18 танкпа тапăнса кĕнĕ пулин те, пĕр утăм та малалла каяйман. Совет хĕçпăшалĕ тĕп тунă фрицсемпе гансем сахал мар йăванса выртаççĕ кунта.

Çапăçу питĕ вăйлă пулчĕ, анчах пирĕн воинсем çĕнтерчĕç. Çĕмĕрĕ те тискер тăшман вăйне хавшатрĕç те малалла куçса пыма тытăнчĕç. Григорьев артиллерисчĕсем те, пехотăран пĕр утăм та юлмасăр, малалла пычĕç.

— Маттур, Беляков, питĕ пултаратăр. Сире правительство наградине илме тăрататăп, — терĕ старши лейтенант Григорьев.

Григорьевпа унăн артиллерисчĕсем хăрама пĕлмесĕр çапăçнине çакă лайăх çирĕплетсе парать: пĕр тупă тăракан вырăна çичĕ нимĕç танкĕ тапăнса пынă, анчах артиллеристсем пĕр утăм та каялла чакман.

Анатолий Беляковăн тупă расчечĕ нимĕçсен пĕр танкне стройран кăларнă хыççăн, ыттисем тупăсемпе пулеметсенчен вăйлă персе, ун çине тапăнса пынă. Пĕр танкĕ Комаров боецăн окопĕ урлă каçса кайнă. Хăрама пĕлмен рядовой Комаров утмăл тонна йывăрĕш машина хăйĕн çийĕпе иртсе кайсанах ура çине сиксе тăнă та, тупă патне чупса пынă.

— Тăшман пехотине лайăхрах çунтарăр! — каллех янраса кайнă Григорьевăн команди.

Снарядсем гитлеровецсем тĕлне пыра-пыра ÿксе, шартлата-шартлата çурăлнă. Анчах çав вăхăтра тупă снарячĕсем пĕтсе çитнĕ. Çакна курса, нимĕçсен тепĕр виçĕ танкĕ огневой позици патне çывхарма пултарнă.

— Пĕр утăм та каялла чакмастпăр...

Батарея командирĕ Григорьев, оруди расчечĕн командирĕ Беляков тата рядовой Плужников хăйсем тупăран тĕл тивретнипе чарса лартнă нимĕç танкĕ патне чупса кайнă. Беляков вăшт-вашт çеç танк ăшне кĕрсе кайнă та унăн башнине тăшман еннелле çавăрнă. Вăл пĕр кнопка çине пуссан, тупăран снаряд тухса ыткăннă. А-а капла иккен!.. А ну — лайăхрах тутанăр... — тенĕ те хыпаланса ĕçлеме тытăннă.

Çапла вара пирĕн артиллеристсем нимĕç танкĕ ăшĕнчен гитлеровецсем çине питĕ вăйлăн персе тăнă. Григорьев тĕл пеме кăтартса тăнă.

Çав вăхăтрах сулахай флангран, вĕтлĕх вăрман енчен, нимĕç автоматчикĕсен тепĕр ушкăнĕ тапăнса килнĕ. Артиллери офицерĕ Григорьев, огневой позицири боецсене пуçтарса, атакăна илсе кайнă. Вăл ертсе пынипе пирĕн 13 боец нимĕçсен 50 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тупă патĕнче снарядсем пĕтсе çитсен, вĕсем аллисене автоматсемпе гранатăсем илсе, тăшман çине ыткăннă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Поснар-касси колхозникĕсен наказне лайăх пурнăça кĕртет Илья Иванович Григорьев. Унăн кăкăрĕ çинче халь Отечественнăй вăрçăн 2-мĕш степень орденĕпе «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕсем ялкăшса тăраççĕ. Нумаях та пулмасть пĕр çапăçура паттăрлăхпа пултарулăх кăтартнăшăн ăна каллех правительство наградине илме тăратрĕç.

Капитан Т. МАЙОРОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР.

Чăваш АССР Наркомпросĕ ача сачĕсен воспитателĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли виçĕ уйăхлăх курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Курса 9—10 çул вĕреннисене илеççĕ.

Курсра июнĕн 15-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 34, Областной дошкольный методический кабинет.

Курсантсене стипенди тата хваттер параççĕ. Ытти çĕртен килекенсен хăйсемпе пĕрле выртса тăмалли вырăнсем тата çăкăр карточкисем илсе килмелле.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне Шупашкарта ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: секторсен начальникĕсем, экономистсем, ĕçсен управляющийĕ, бухгалтерсем, статистиксем, секретарьсем, машинисткăсем, шоферсем. Ĕç укçине ставка тăрăх тÿлеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Советов, 4-й этаж, ком. 101.

2—1.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паянтан, июнĕн 14-мĕшĕнчен, пуçласа кунсерен

„СЕВЕРНАЯ ЗВЕЗДА“

ятлă американецсен çĕнĕ, сасă илемлă фильмне кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малалли кунсем валли те ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Шупашкарти Горкомхозăн çулйĕр секторне çакăн пек работниксем кирлĕ: баланс тума пĕлекен бухгалтер тата счетовод-кассир

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 4. II этаж.

Чăвашсен ялхуçалăх институтне главнăй бухгалтер васкавлăн кирлĕ. Хваттер параççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00183 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.